Василий Давыдов-Анатри

## Тăван çĕршывăм, Чăваш çĕршывĕ

*Кĕвви Ф. Лукинăн*

Аслă Атăл, анлă Атăл хĕрринче,
Хĕн-хур тӳснĕ чăваш халăх çĕрĕнче
Ĕмĕр кĕтнĕ тус-тăванлăх вăй илет,
Ĕмĕр кĕтнĕ çĕнĕ пурнăç çĕкленет.

*Хушса юрламалли:*
Çĕршывăма саламласа
Шурăмпуç çуталса хăпарать,
Сурпан сырса, йăл-йăл кулса
Пире ырă, çĕнĕ кун сунать.

Пирĕн ĕçлĕ, пултаруллă халăхра
Çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ упранать.
Мĕнпур халăх ирĕк тупнă çĕршывра
Сар хĕвеллĕ çутă куншăн тăрăшать.

*Хушса юрламалли:*

Хамăр тупнă сенкер çăлтăр тӳпере, -
Пирĕн çирĕп пĕрлĕх пытăр ĕмĕре...
Тăвансемĕр, эпир Улăп йăхĕнчен, -
Çĕнтерӳллĕн, паттăр ут эс, Чăваш ен!

*Хушса юрламалли:*

*Давыдов-Анатри, В. Тăван çĕршывăм, Чăваш çĕршывĕ / В. Давыдов-Анатри // Юррăмсем-çунатăмсем : сăвăсем / В. Давыдов-Анатри. – Шупашкар, 1997. – С. 5.*